# КУНҪУЛ ТӲПИНЧЕН

Кашни ҫын пурнăҫĕнчех халиччен мĕн тунине тишкерсе тухас, ăна ҫамрăк чухнехи куҫпа мар, хальхи ăспуҫпа виҫсе хаклас тапхăр ҫитет. Писательсем вара хăйсем ку таранччен ҫырнине пухса пĕтĕмлетме, ҫырнисен пуххине хатĕрлеме тытăнаҫҫĕ. Теприсем тата, ĕмĕр тăршшĕпех канăҫсăр пулнисем, хăйсен ĕҫĕсене тепĕр хут пăхса тухса тӳрлетме пикенеҫҫĕ. Виҫҫĕмĕшĕсем, пурăнса иртнĕ кунҫул тӳпинчен пăхса, хăйсен тĕп кĕнекине ҫырма пуҫлаҫҫĕ.

Ухсай Яккăвĕ маларах асăннă писательсен юлашки ушкăнне кĕрет пулĕ. Ухсайăн халиччен мĕн ҫырнипе лăпланса ларас, пĕр вырăнта тапăртатса тăрас йăла ҫук вара, вăл яланах малалла, ҫитмен ҫĕрелле талпăнать. Юлашки ҫулсенче те вăл малтанхи пекех тухăҫлă та ăнăҫлă ĕҫлерĕ, ҫĕнĕ произведенисем ҫырса кăларчĕ. Унăн «Ача чухнехи ҫăлтăрăм» кĕнеки Мускавра вырăсла пичетленсе тухрĕ, ăна вулакансем пысăк хак пачĕҫ. Ҫак кĕнекешĕн поэта РСФСР тата Чăваш АССР государство премийĕсене памалла турĕҫ. РСФСР писателĕсен Союзĕн правленийĕн 1972 ҫулхи июньте Хусанта пулса иртнĕ ларăвĕнче те Ухсайăн асăннă кĕнеки пирки тухса калакансем ăна мухтаса калаҫрĕҫ. В. Дементьев критик ҫапла каларĕ: чăваш халăх поэчĕн Ухсайăн «Ача чухнехи ҫăлтăрăм» трилогийĕн пуҫламăшех эстетикăри ҫĕнĕ пахалăхсемпе палăрса тăрать, терĕ. РСФСР писателĕсен Союзĕн секретерĕ С. Орлов та Ухсайăн эпикăллă произведенийĕсенчи революциллĕ традицисене палăртса хăварчĕ.

Ку кĕнеке виҫĕ поэмăран тăрать: унта «Ача чухнехи ҫăлтăрăм», «Чапаевпа тĕл пулни», «Силпири асамат кĕперĕ» поэмăсем кĕнĕ.

Виçĕ поэми те ачалăхпа çыхăннă, çав нихçан асран кайми тапхăр картинисенчен пуçланаççĕ, поэт çуралнă тавралăхпа, унти çутçанталăк илемĕпе паллаштараççĕ. Эпир кунта каллех Ухсай çутçанталăк çинчен питĕ хитре çырма пултарнинчен тĕлĕнетпĕр, асамлă йĕркесене вуласа киленетпĕр. Малтанхи йĕркесенчех вулакан вĕсене чăн-чăн чăваш поэчĕ çырнине туйса илет, хăйĕн пĕтĕм чунĕпе чăваш çĕршывне, чăваш тĕнчине кĕрсе ӳкет. Силпи енчи илемлĕ тавралăх куç умне тухса тăрать, çурхи чечексен тутлă шăрши сарăлнăн, шăнкăр-шăнкăр çăлкуçсен сасси илтĕннĕн туйăнса каять.

Ухсай ăста çырса кăтартнă сăнсем яланлăха асра юлаççĕ: унăн сăввисенче хĕвел пин урипе çап-çамрăк улăп пек утать, кĕлти-кĕлтипе çутă сапалать, вăл çивĕч хăйранă пуртă пекех çап-çутă; пĕлĕтсем ушкăн шурă сурăх евĕр курăнаççĕ, ват тухтăр иртнĕ пек хуллен-хуллен шăваççĕ; юханшыв такам улăхра пăрахса хăварнă хĕç пек çуталса выртать, çерем тĕве кĕççи пекех çемçе, çĕрле çаранта чĕртнĕ вучах капан пек ялкăшса çунать—кашни ӳкерчĕк хăйне евĕрлĕ.

Поэт пире çуллахи çанталăка çеç мар, хĕле те асра юлмалла ӳкерсе парать. Акă, тăман тапранса каять те ушкăн-ушкăн тилĕ чупнă пек туйăнать, хĕвелĕ кĕлпе çутатнă пилĕк пуслăх пăхăр укçа пек хĕп-хĕрлĕн курăнать, çил асар-писер йĕке пекех çаврăнма пуçлать. Лăпкă хĕл кунĕнче йăмра турачĕсем пас тытнăран пĕрене пекех пысăк. Пӳртри таракансем те пĕр йĕкĕр ывăç сарă ылтăн сапнă евĕр курăнса каяççĕ. Кунашкал танлаштарусем, метафорăсем эпир кĕнекере тăтăшах, кашни йĕркерех тĕл пулатпăр. Ку ёнтĕ Ухсай кашни япаларан чăн-чăн поэзи хĕлхемĕ çиçтерме пултарни çинчен калать.

Кунти илемлӗ ҫутҫанталӑк ытамӗнче ача-пӑча, яш-кӗрӗм ӳссе ҫитӗнет, вӑй илет. Вӗсем ҫинчен, телейлӗ те асран кайми ҫав вӑхӑт ҫинчен Ухсай пӗтӗм чун-чӗрипе хавхаланса ҫырать, кашни вулакан чӗринче ырӑ туйӑмсем вӑратать, тепӗр чухне ҫав вӑхӑт хӑвӑрт иртсе кайнӑшӑн тунсӑх та пусса илет.

Ҫунатлӑ та хаваслӑ ачалӑх тапхӑрне ҫавнашкал ӗнентерӳллӗ те хумханмаллӑ ҫырса кӑтартма чӑннипех пысӑк талант кирлӗ. Поэт питӗ тӗрӗс калать:

Епле ытарайми илемлӗ эс,
Ачалӑх...
Паян та, халь те юлнӑ
Манӑн асӑнмалӑх
Инҫе выртма вучахӗн
Тӗтӗмин шӑрши.

Самани ҫӑмӑлах пулман та, анчах мӗн пуласси-курасси пӗтӗмпех малта, шухӑш-ӗмӗт ҫунатлӑ, хуйхи-суйхи те ача-пӑчана питех лекмен-ха. Пирӗн чӗресене кӗрсе курасчӗ: унта мӗн чухлӗ ылтӑн та мерчен! — тет поэт. Ҫӗр ҫинчи хуртсем те ахах пек ялкӑшаҫҫӗ, вӗсене ачасем кокарда вырӑнне ҫӗлӗксем ҫине тирсе яраҫҫӗ. Пуҫра кӗсен, анчах вӑйӑра ҫӗнтерсе, «патшана» лараҫҫӗ. Кӑвайт ҫутинче ҫӗтӗк сӑхман та патша тумӗ пек ҫиҫсе ҫунать. Юмах-халап тӗнчине путсан, ачасем ҫӑмахсӑр шӗвӗ яшкапа та лӑпланаҫҫӗ, юмахсенчи паттӑрсем евӗр хура тур утсемпе кастарса ҫӳреҫҫӗ. Вӗсене ҫӑтмах та кирлӗ мар — тӗнче илемлӗ, шухӑшсем аслӑ, ӗмӗтсем ҫунатлӑ. Хаваслӑ та телейлӗ пулма, савӑнса-выляса ҫӳреме ачана нумаях та кирлӗ мар-мӗн: ача чун-чӗрине ӑнланни, лӑпкӑ та мирлӗ пурнӑҫпа пурӑнни ҫеҫ кирлӗ. Кӗл ҫинче пӗҫернӗ ҫӗрулми, ҫӑмах яшки, ҫӑкӑр чӗлли, кӑшкар утипе ыхра-сухан, хӗлле тӑхӑнма кӗрӗкпе

çĕлĕк, кăштах теттесем, ашшĕ-амăшĕ юратни пулсан, чăваш ачи хăйне телейлĕ, çынран катăк мар тесе шутланă.

Анчах Ухсай ӳснĕ вăхăтра чăваш ачисен çавсем те çителĕклĕ пулман, вĕсем йывăр та пăтрашуллă саманара ӳссе çитĕннĕ. Йĕлме хуппи вĕретсе, пăртакçă çăнăх хушса пĕçернĕ çăкăр çинĕ, юман йĕкелĕ, çăка кăчки пуçтарнă. Граждан вăрçи çулĕсенче Чăваш çĕршывĕнче пурнăç юхăнса кайнă, выçлăх пуçланнă.

Çав вăхăт çинчен эпир «Силпири асамат кĕперĕ» поэмăра акă мĕн вуласа пĕлетпĕр: яла Рашит пушкăрт, ача ашшĕн çывăх тусĕ, тайкаланса пырса кĕрет те халсăрскер, çавăнтах тӳнсе каять. Унăн пĕтĕм çемйи выçлăхпа вилсе пĕтнĕ, хăйне те вилесрен аран-аран чĕртеççĕ. Чăваш ялĕсенче те вилнисене чикме çын юлман, вĕсене шаршанласа хураççĕ.

Чăваш ялĕ ун чухне тĕшмĕшрен хăтăлса çитеймен-ха, ку вара ахаль те çитмен пурнăçа татах йывăрлатать. Вилĕсене хăратма ялта сĕрен ирттереççĕ. Чăвашсен ĕлĕкхи туррисем — йĕрĕхĕ, хĕртсурчĕ, ийе карчăк, вĕсемсĕр пуçне юмăç-тухатмăшĕ — пурте хăйсем валли парне ыйтаççĕ. «Мемме ыйтать хăй выçă вăхăтра мĕнпур усал-тĕсел». Анчах пуринчен те хаяртараххи халĕ выçлăх, ăна нимĕнпе те улталама çук:

Пыра-киле
çĕнтерчĕ пур турра
усал турри.
Вăл — выçă хырăм.

Хресчен кашни кунах уя тухса пăхать, ыраш пиçсе çитессе çав тери кĕтет. Пĕтĕм шанчăк çĕнĕ тырă çинче, анчах вăл пулса çитессе чылай кĕтмелле-ха.

Ял урлă час-часах çар иртет. Ял халăхĕ, мĕн кирлине урапасем çине тиесе, вăрманалла тухса тарать те нӳхрепсенче пытанса ларать. Ачасен вăййисем те саманине кура улшăннă: вĕсем ытларах вăрçăлла-салтакла выляççĕ, пуля-етре пуçтараççĕ, «хĕрлисемпе» «шуррисем» çине пайланса пĕр-пĕринпе çапăçаççĕ. Пуканисем те вĕсен сăр шинеллĕ, хĕçпе пăшалĕ те пур иккен. Чухăнсен ачисем çĕлĕк çине хĕрлĕ çăлтăр çакаççĕ, ашшĕ-амăшĕ пекех Хĕрлĕ çара кăмăлласçĕ.

Пĕтĕм ял икке пайланнă: пĕр енче пуянсем — вĕсем, выçлăхпа усă курса, тата ытларах пуясшăн, ĕлĕкхине каялла тавăрасшăн. Хура халăх вара Совет влаçĕ, Ленин хăй пулăшасса шанать. Ача Ленин çинчен учительница каласа панине пĕр сăмах сиктермесĕр итлет. Учительница Чĕмпĕрте И. Я. Яковлев шкулĕнчен вĕренсе тухнă, унта вăл Ленин ашшĕне те, унăн пиччĕшĕпе хăйне те курнă, вĕсем чăваш шкулне тăтăшах пырса çӳренĕ.

Хыпар:

— Ку выçлăха çĕнтерекен
Этем пур,— терĕ,—
Халăха хĕрхенекен
ялтан яла кĕрсе
çӳрет иккен
хăй Ленин,
аслă Ленин,
пирĕн Ленин.

Учительница сăмахĕсене итленĕ сакăр çулхи ача шухăшĕпе Мускава, Ленин патне вĕçсе каять, унран пулăшу ыйтма шутлать. Ленин чăвашран килнĕ ачана Кремле илсе каять, хăй патне кĕртсе тутлă чей ĕçтерет, халăх нуши çинчен ыйтса пĕлет:

— Аван-и, ыльăм,—
терĕ вăл мана,
мана хул хушшинчен
тытса уттарчĕ...

Халăх Ленина шанни, Совет влаçĕ пулăшасса кĕтни часах чăнна тухать. Ялта обществăллă столовăй уçаççĕ, унта чи малтан ачасене пухса çитереççĕ, нумай çын вилĕмрен хăтăлса юлать.

Кунта Ухсай Чăваш çĕршывĕнче чăннипех пулса иртнĕ ĕçсене çырса кăтартнă. Чăвашра выçлăх алхаснă вăхăтра Мускав хули, Ленин хăй пысăк пулăшу панă, Совнарком ку тĕлĕшпе ятарласа постановлени йышăннă, Мускав çыннисем хăйсен паекĕнчен катса Чăваш облаçне апат-çимĕç тиесе янă.

Çав вăхăтра пуянсем мĕн хăтланаççĕ-ха? Вĕсем çĕрлесенче, алăкĕсене шăлт-шалт питĕрсе, ял çине шăрши тухасран шикленсе, какай нимĕреççĕ. Çавсемех чухăнсене кивçенле çăнăх панăшăн ытлашшипех каялла сăптăрса илеççĕ. Акă Чапаев çарне кайнă Палюк арăмне — Евьен аппана Çӳçмен Еккимĕпе унăн хӳрешкисем епле асаплантараççĕ:

— Э-эх! —
Вăрларăн çăнăх-и е çӳп?
— Ы-х!
Килмест-и санăн йĕрессӳ те? —
питрен те,
кăкăртан та кӳп, те кӳп!
пырса çапаççĕ
пур ухмах та сӳтĕк.

Евьен аппа ӳкет те,
çĕр çинчен
ăна йăтаççĕ,
танкăлт уттараççĕ.

— Каллех тунатăн-и? —
çăварĕнчен
лăч-лач параççĕ те
шăлсем катаççĕ.

Пуянсем Ĕвьен аппа кĕлетне хăйсем çăнăх пырса хураççĕ те вăл вăрă тесе сăмах сараççĕ, çапла майпа унăн упăшкишĕн — Палюкшăн таваççĕ. Хăй ялта чухне Палюк пичче пуянсене хытах хĕстернĕ пулнă, чухăнсемшĕн çирĕп тăнă. Граждан вăрçи пуçлансан, Чапаев çарне хутшăннă та çапăçура пуçне хунă.

Çапла, ача пĕчĕклех класс кĕрешĕвĕн историне кĕнекесем тăрăх кăна мар, хăй куçĕпе курса вĕренет, майĕпен чăнлăхпа тĕрĕслĕх кам енче иккенне ăнкарма пуçлать. Тепĕр поэт сăмахĕсемпе каласан, вăл шуррисене мĕн ачаранах курайми пулса ӳснĕ. Граждан вăрçи паттăрĕпе — Чапаевпа тĕл пулни ача асĕнче ĕмĕрлĕхе юлать, унăн çутă сăнарĕ уншăн яланлăха ырă тĕслĕх пулса тăрать.

Ухсай хăйĕн геройĕсене час-часах ыттисемпе, тепĕр чухне вĕсене пачах хирĕçле сăнарсемпе танлаштарса кăтартать, çапла контраст меслечĕпе усă курнăран вĕсен ырă пахалăхĕсем тата уççăнрах курăнаççĕ. Малтан ял витĕр каялла чакакан шуррисем иртеççĕ. Вĕсем хăйсене мĕнле тытаççĕха? Салтак эшкерĕ хăраса тарни ачана кулăшла курăнать:

Э-хе, кусем иккен!
Эпир паллатпăр.
Хавасла
Тӳнкĕр-тӳнкĕр параппан
Кĕрлевĕнче
Вĕсем питех те паттăр
Асанчĕç
Пелепей енне кунтан.

Çиелтен пăхма çеç хитре, чĕри хăравçă иккен кусен. Вĕсене Антанта лайăх тумлантарнă, хĕçпăшал та нумай панă, ятарласа вĕреннĕ генералсемпе офицерсем те çук мар вĕсен, çапах та Чапаевран вĕсем тармаллипех тараççĕ.

Пустав шинель,
Карттус çинче кокарда.
Аллисенче
Шап-шурă перчетке.
Офицерсем.
Юпа çумне кăкар та
Тĕлле те лапчăт
Ун пек инкеке!

Çак каппайчăксем ялтан тухса кайсанах, хĕрлисем пырса кĕреççĕ. Вĕсем çийĕн кăвар çунатлă кайăк çӳле кармашнă евĕр хĕрлĕ хăмач вĕлкĕшет, ялав йĕс чĕлхеллĕ оркестр шавĕнче мăнаçлăн ярăнса иртет. Çар пуçĕнче кăйкăр кайăк евĕр командир юланутпа пырать, çурăмĕ хыçĕнче тир бурка çилпе вĕçсе çĕкленет.

Канма ларнă салтаксене чăваш ачисем тăрă çăл шывĕ тултарса параççĕ.

— Маттур! — тесе
Çак çын мана аларĕ
Кĕтмен çĕртен
Сасартăк чăвашла.

Чапай ачасене кухньăна илсе каять, вĕсене тăраниччен çитерме повара хушать. Ача тав тăвасшăн, анчах вырăсла пĕлмест. Вăл Чапай хушамат мĕне пĕлтернине ăнланма тăрăшать, хăй ăсĕпе çапла шутлать:

Апла иккен,
Чапран Чапаев тенĕ.
Чăнах та
Тĕрĕс ячĕ чăвашла.

Ухсай поэзийĕ халăхпа, унăн шухăш-кăмăлĕпе уйрăлми тачă çыхăннă, çакăнта унăн вăйĕ тата чăнлăхĕ. Вăл халăхшăн чунне пама хатĕр çынсене мухтать, мĕнпур çынна çак енчен пăхса хаклать. Халăхпа пĕрле пурăнакан, халăхран нихçан та уйрăлман çынсем уншăн чи илемлисем те маттуррисем пулаççĕ. Чапаев пек геройсем шăпах ĕнтĕ çавăн пек çынсем, Чапаев ырă та паттăр çын пулни ача пек таса чуна та паллă.

Революципе граждан вăрçин вутлă-çулăмлă çулĕсем тăрăх çĕнтерӳллĕн утса тухнă халăхсемшĕн, çав шутра чăвашсемшĕн те тинех анлă та çутă малашлăх уçăлать. Халĕ ĕнтĕ ашшĕ-амăшĕ тахçантанпа ĕмĕтленни, пĕтĕм тăван-хурăнташ шутлани пурнăçа кĕме пултарать: ачана вĕренмешкĕн çул уçă, вăл тăван халăхшăн усăллă, вĕреннĕ çын пулать.

Темĕнле йывăр самантра та ачана çутă ĕмĕт чĕнсе тăрать, совет саманинче çак вĕренес ĕмĕт чăн пуласса вăл çирĕп ĕненет. Ашшĕ те ăна вĕренме ярасси çинчен калать:

Ачам, ху пулăн
ăмăрт пек хитре,
вĕренӳре
инçе вĕçме çунатлă.
Килтен ăсанăн
эсĕ Чĕмпĕре,
унта та çӳрĕн
пĕкĕнми хăватлă.

Чăваш ачисен шăпи çĕнĕ саманара çăнах та телейлĕ пулать, вĕсем Совет влаçĕ панă тивлетпе Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче çеç мар, Мускавра тата ытти хуласенче вĕренсе тухаççĕ. Вĕсенчен ученăйсем, инженерсем, искусствăпа литература çыннисем, ытти специалистсем ӳссе çитĕнеççĕ.

«Ача чухнехи ҫӑлтӑрӑм» кӗнекене кӗнӗ произведенисем — автобиографиллӗ поэмӑсем, вӗсенче поэтӑн хӑйӗн пурнӑҫӗпе ҫыхӑннӑ нумай ырӑнсене тупма пулать. Поэт хӑйне мӗн ачаран пӑхса ӳстернӗ тӑван Силпи тавралӑхне, кунти ӗҫчен те ырӑ кӑмӑллӑ халӑха, чӑваш йӑли-йӗркине мухтаса юрлать, вӗсене хӑйӗн поэзийӗн сӑпки выранне хурса хаклать. Хӑйӗн таланчӗ ӗҫчен халӑх хушшинче ӳссе ҫӗкленнине, ӑна халӑх шухӑш-кӑмӑлӗ витӗрех ҫапнине, хӑйӗн сӑвви-юрри ӗҫри тарпа исленнине палӑртса, поэт ҫапла ҫырать:

Юратрӑм хамӑн
Силпири тӑва,
ӑна чӑваш юррин
Олимпӗ терӗм,
куҫҫуль тӑварӗ
витнӗ хам сӑвва
Силпин шур чуллӑ
ҫӑлӗнче чӳхерӗм.

Чӑваш сӑвви-юрри акӑш-макӑш хитре кермен-сенче мар, ҫӗр ӗҫлекенсем хушшинче, вӗсен куллӗнхи ӗҫӗпе кӗрешӗвӗнче ҫурални ҫинчен каласа, поэт ҫакна та палӑртса хӑварать:

Хура мӑянлӑ
ҫӑкӑр йӳҫҫинче
ҫуралчӗ манӑн та
туссен телейӗ.

Ҫак кӗнекене кӗнӗ поэмӑсене эпир итоглӑ произведенисем тенӗччӗ, вӗсене Ухсай пултарулӑхӗн хальхи тапхӑрӗн ҫӗнӗ ҫитӗнӗвӗ тесе хакланӑччӗ. Ку поэмӑсенче Чӑваш ҫӗршывӗпе унӑн ҫыннисене чунпа ӑнланса, чунпа юратса ҫырса кӑтартнӑ. Поэт халӑхпа сывӑх пулнине палӑртма тепӗр чухне критиксем ҫапла ҫыраҫҫӗ: ку е тепӗр про-

изведенире вырӑнти наци сӑн-сӑпачӗ, хӑйевӗрлӗхӗ вӑйлӑ сисӗнет, теҫҫӗ. Ухсай пирки вара ҫапла калани пачах та ҫителӗксӗр, унӑн поэзийӗн тӗп паллисене уҫса параймасть. Колорит тени вӑл ҫиелте выртакан япала, ҫыннӑн тулаш сӑн-сӑпатне, унӑн тумӗпе кил-ҫуртне, апат-ҫимӗҫне, хӑшпӗр йӑлисене ҫырса панипех ҫырлахать. Ухсай сӑввисенче вара эпир колорит ҫеҫ мар куратпӑр, унӑн кашни йӗрки, кашни сӑнарӗ чӑн-чӑн чӑвашӑн, физикӑри пек каласан, кашни элементарлӑ пайӗ чӑвашла, чӑвашлӑх тени кунта ӑшчиккинче выртать, произведенин содержанийӗпе форминче те палӑрать.

Асӑннӑ поэмӑсем Ухсай пултарулӑхӗ юлашки ҫулсенче тата ҫӳллӗрех пусӑма ҫӗкленни ҫинчен, вӑл философиллӗ лирика енне сулӑнни ҫинчен калаҫҫӗ. Ассоциаци ӑсталӑхӗ, Ухсайӑн халиччен те вӑйлӑ пулнӑскер, ку произведенисенче тата хытӑрах сисӗнет. Хушӑран пӗр-пӗр поэт нихӑш енчен те пӗр йӗркене килмен япаласене те, сӑмахран, лашапа чернил кӗленчине те, пӗрле ҫыхӑнтарма пултарать. Кунта унашкал ҫыхӑнусем ҫинчен сӑмах пымасть. Чӑн пурнӑҫра куҫа курӑнсах кайман ҫыхӑнусене тӗпчесе тупасси, ҫутҫанталӑкпа обществӑри пулӑмсен объективлӑ сӑлтавӗсене уҫса парасси ҫинчен калас пулать.

Ухсай час-часах ҫутҫанталӑкпа ҫынна, ҫынпа чӗрчуна, ҫынпа халӑха, ҫынпа обществӑна пӗрлештерме тӑрӑшать. Паллӑ ӗнтӗ, иртнӗ вӑхӑтсенче эксплуататорла обществӑсенче, ҫав ҫыхӑнусем хавшанӑ е татӑлнӑ пулнӑ, пуҫпулса тӑракан классем ҫынна обществӑна хирӗҫ, ҫавӑн пекех ҫутҫанталӑка та хирӗҫ тӑратма пайтах тӑрмашнӑ. Тӗслӗхрен, акӑ, христиансен тӗнӗ пӗлӗтпе ҫӗре яланах пӗр-пӗринпе хирӗҫле япаласем тесе шутланӑ. Христиансен чиркӗвӗ ӗрентнӗ тӑрӑх, ҫӗр вӑл тасамарлӑхпа ҫылӑх вырӑнӗ, пӗлӗт ҫинче вара

таса сывлăш, унта пирĕштисем, çылăхсăр чунсем пурăнаççĕ. Ухсай вара пĕлĕтпе çĕре çывăхлатма, вĕсем хушшинче пĕрпеклĕхсем тупма тăрăшать. Ку вăл космос ĕмĕрĕнче кирлех пулмалла.

Кĕнекене тĕплĕн вуласа тухсан, унта хальхи тапхăрти Ухсай поэзийĕн ытти уйрăмлăхĕсене те курма пулать, вĕсем пирĕн идеологипе, пирĕн саманари чи гуманистла вĕрентӳпе уйрăлми çыхăннă. Çакă ĕнтĕ кĕнеке пахалăхне ӳстерет, питех те талантлă та оригиналлă сăвăçăн асамлă поэзийĕпе паллаштарать.

Ип. ИВАНОВ